**«Эпир ураран ӳкетпӗр…»**

Эпир ураран ӳкетпӗр
Халран кайса.
Эпир пӗр-пӗрне чикетпӗр
Тăпра чавса.

Эпир ӗнер те юнлă,
Паян та, кур.
Эй, хăшӗ унта хăюллă?
Тухсам, маттур!

Хитрех те кунсем вӗçеççӗ,
Темскер тарать.
Темскер пирӗнтен инçеччӗ,
Халь ак! – тăрать.

Çапах та эпир васкатпăр
Каллех вута.
Таса чăнлăха шыратпăр
Нимрен малтан.

Анчах та, пулать, йăнăшатпăр,
Вара эсир
Епле тарăхса йынăшатăр! –
Эй, Турă, сир.

Кăштах чап шевли выртсассăн
Пуçсем çине.
Эсир те ăна тытасшăн
Серепене.

Çапла-мӗн: эпир – арена.
Эсир – залра.
Пире чӗрӗ юн хӗретнӗ,
Сире – сăра.

Эпир пурнăçпа тӳлетпӗр,
Эсир – укçан.
Эпир кашни кун вилетпӗр,
Эсир – хăçан?

*Айташ, Ю. «Эпир ураран ӳкетпӗр…» / Ю. Айташ // Чăваш литературин антологийӗ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 405.*